чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

92 /26498/№ Кĕçнерни кун, 2014, çу (май), 22 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Брифинг

Инвестици çителĕксĕр хыватпăр

Ытлари кун ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноç тата сутуилӳ министрĕн çумĕ Инна Антонова брифинг ирттерчĕ. РФ Правительстви федераци субъекчĕсен ĕç тăвакан органĕсен ĕç-хĕлне 2013 çулшăн хак парассипе çыхăннă ыйтăва тишкерчĕ.

«Раççей Регион аталанăвĕн министерстви субъектсен влаçĕ хăйĕн тивĕçне пĕлтĕр еплерех пурнăçланине хаклакан докладпа паллаштарнă, – терĕ И.Антонова. – Вăл социаллă пурнăçа лайăхлатас, экономикăна аталантарас тĕлĕшпе влаç вырăнта пурнăçлакан ĕçе пĕтĕмлетет. Правительство çак рейтинга 2008 çултан пуçласа йĕркелет. Малтан регионсен 300 ытла кăтартăвне тишкернĕ. 2012 тата 2013 çулсенчи ĕçе хакланă чух 12-шне çеç тĕпченĕ. Тĕп фондсене патшалăх е муниципалитет хыснинчен уйăрман укçаран инвестици хывни, бюджета налук тата налук шутланман кĕмĕл кĕни, пĕчĕк бизнеса аталанма пулăшни, субъектра пурăнакансен мĕн пур çăл куçран илекен тупăшĕ, пурăнмалли çурт тăвасси экономика аталанăвне хакланă чух тĕп вырăн йышăнаççĕ.

Кашни çын вăтамран миçе çул пурăнни тата вилни, регионта пурăнакансен йышĕ, ĕçсĕрлĕх, тăлăх ачасене çемье хӳтлĕхне илни, шкул пĕтерекенсем патшалăхăн пĕрлехи экзаменне мĕнле панине кура палăртакан вĕрентӳ ĕçĕн пахалăхĕ социаллă пурнăç аталанăвĕн индикаторĕсем шутланаççĕ».

Çынсене влаç ĕç-хĕлĕ мĕнлерех тивĕçтернине вĕсем регион ертӳçин, коммуналлă хуçалăх ĕçне, медицина пулăшăвне, физкультурăпа спорта еплерех пахаланине, субъект хăрушсăрлăхĕ мĕнле шайрине пăхса хакласçĕ. Рейтинг пĕтĕмлетĕвĕнче экономика кăтартăвĕсем – 50%, социаллă пурнăçăн – 30, çынсен шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлни 20% йышăнаççĕ.

Министерство çумĕнчи комисси Чăваш Енре çынсен пурнăç тăршшĕ вăрăмланнине, çемье хӳттисĕр пурăнакан ачасем сахалланнине, республика патшалăх парăмне пĕтерес тĕлĕшпе аван ĕçленине палăртнă.

Правительство 2012 çулшăн Чăваш Ене – çирĕм саккăрмĕш, иртнĕ çулшăн çирĕммĕш вырăн панă. Эпир федерацин Атăлçи округĕнче пиллĕкмĕш вырăна тивĕçнĕ. Республика – 2013 çулта экономика тата социаллă пурнăç аталанăвĕн кăтартăвĕсене лайăхлатнă 39 регион йышĕнче. 2012 çулта республикăра курса каласнă çынсен – 37,8, пĕлтĕр 40,9% влаç ĕçĕ тивĕçтернине пĕлтернĕ. Кăтарту ку енĕпе те лайăхланнă.

Дмитрий Борцов социолог федерацин Сыхлав служби республикăра ыйтăм ирттерсе хатĕрленĕ пĕтĕмлетӳпе вăл ертсе пыракан «СОЦИС» организаци пурнăçланă çавнашкал ĕç кăтартăвĕсем пĕтĕмĕшле илсен пĕрешкелех пулнине çирĕплетрĕ. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра татса паман ыйтусем капланнине асăнчĕ. Министр çумĕ капитала инвестици хывас тĕлĕшпе юридици сăпачĕсем, пурлăх тытакан уйрăм çынсем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

СДАЕМ В АРЕНДУ

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

Со всеми вопросами обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.

Пĕтĕм тĕнчери VII кинофестиваль

Çĕр çинчи çăлтăрсем

сар.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Наци библиотекинче çу уйăхĕн 21-мĕшĕнче иртнĕ пресс-конференци Раççей халăх артисчĕ, РФ Общество палатин членĕ, "Мосфильм" киноконцернăн генеральнăй директорĕ Карен Шахназаров режиссер тата кино, театр актерĕ, режиссер, сăвăç, Раççей халăх артисчĕ Александр Панкратов-Черный хутшăнчĕç. Вĕсем пирки çĕр çинчи çăлтăрсем тесçĕм килет. Вĕсене Шупашкарти кинофестивальте курасси – пысăк телей. Унтан та ытларах, Карен Георгиевич – пирĕн кинофестивалĕн президенчĕ те. Сумлă, çĕр-шыв шайĕнчи паллă çыннăн ĕç кунĕ минут таранах шута илĕннĕ пулĕ, çавăнпа та вăл иртнĕ çулсенче Шупашкарта пулаймарĕ. Кăçал вара çиччĕмĕш кинофестивале хутшăнма май тупаннă.

Журналистсем Карен Георгиевича тĕрлĕ ыйту пачĕç. Пĕрремĕшĕ "Мосфильмпа" çыхăнни пулчĕ. Ăна йĕркеленĕренпе кăçал 90 çул çитет. Мĕнлерех уявлама хатĕрленни пирки пĕлесшĕн.

– Эпĕ "Мосфильм" ветеранĕ. Ку тарана çитсе те киностудин юбилейĕсене çакăн пек шавлă хатĕрленнине ас тумастăп. Тен, çак самантпа та çыхăннă: совет влаçĕ вăхăтĕнче çĕр-шывра 20 ытла студи пулнă, кашнин çуралнă кунне уявлама май та пулман. Халĕ вара "Мосфильм" Раççейре пĕртен пĕр студи тесен те йăнăш мар.

Уяв ĕçĕ çапларах аталанса пырать: "Мосфильмра" ӳкернĕ фильмсене çĕршыври, тĕнчери кинофестивальсене тăрататпăр, паянхи куравçă патне çитеретпĕр. Ку енĕпе 30 яхăн фестивале хутшăнатпăр.

Журналистсене наци фильмĕсене аталантарас ыйту кăсăклантарчĕ. Ун пирки Карен Георгиевич çапла шухăшлать.

– Паянхи Украина – наци ыйтăвне тытса пыма пĕлменнин тĕслĕхĕ. Нацисене аталантарас, вĕсемпе сыв пуллашас мар тесен ытти ыйтупа пĕрлех тĕрлĕ халăхăн кинематографне ура çине тăма пулăшмалла, халăхăн хăй евĕрлĕхне упраса хăвармалла. Юлашки вăхăтра Якут/Саха/ Республикинче кино ӳкерес ĕç питĕ лайăх пурнăçланса пырать. Унта çулталăкне 6-7 фильм ӳкерме мехел çитереççĕ. Паллах, çакă регион ертӳçисенчен те нумай килет.

Шупашкарти кинофестивалĕн тĕп шăнăрне сахал йышлă халăхсен кинематографне аталантарассипе çыхăнтарнине ырлатăп.

– Хальхи вăхăтра Карен Шахназаров мĕнле проектпа ĕçлет?

– Эммануил Казакевич повеçĕ тăрăх лартнă "Двое в степи" фильмăн продюсерĕн тивĕçĕсене пурнăçлатăп. Çывăх вăхăтрах пысăк ĕçе пуçăнасшăн.

– Раççейре çулталăкра миçе фильм ӳкереççĕ?

– 70 яхăн. Çак кăтарту пысăк тенĕ пулмăттăм. Данире, пĕчĕк çĕр-шывра, – 30-40 картина. Пирĕн патăмăрта кино ӳкерес енĕпе пурнăçа кĕрекен проектсен 80 проценчĕ телекуравпа çыхăннă.

– Сирĕн шухăшăрпа – кинофестиваль мĕнле пулмалла?

– Унта куравçă çӳремелле. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх – Шупашкарта кино курма çӳрекенсен йышĕ пысăк. Ку – ăнăçу. Çакна çухатмалла мар. Халăхшăн вăл – пысăк уяв. Шупашкарти кинофестивалĕн жюрине Раççей халăх артисчĕ Глеб Панфилов ертсе пыма килĕшни те асăннă кинофорумăн сумĕ çĕкленнине палăртать.

Журналистсем, паллах, Александр Панкратов-Черный пирки те тĕплĕнрех пĕлес терĕç.

Александр Васильевич уçă кăмăллă çын-мĕн, каласма юратать. Унтан ытларах ăна çĕр-шывăн паллă мар кĕтесĕсем тăрăх çӳреме килĕшет. Шупашкарта та пĕрремĕш хут мар Алтай тăрăхĕнче кун çути курнă артист, режиссер. Ынченхи киноклубсене ырăпа аса илчĕ. Вăл юлашки вăхăтра режиссер ĕçĕсене пурнăçланинчен ытларах кинора хăй ӳкерĕнет иккен, çак фильмсене хутшăннă: "Лиговка", "Ржевский против Наполеона", "Этим вечером ангелы плакали", "Шкварки" тата ытти те. Шупашкара хальхинче "Мосфильм" йĕркеленнĕренпе 90 çул çитнине халалласа кăтартакан "Мы из джаза" фильмпа паллаштаракан йышпа килнĕ. Александр Васильевич сăвă çырать, унăн кăçал 2 кĕнеке пичетленсе тухмалла. Вĕсенче, автор пĕлтернĕ тăрăх, – çул çинче çуралнă шухăшсем. Çакскерсенчен пĕрне журналистсене вуласа пачĕ.

Ĕнерех Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Карен Шахназарова йышăннă, хăнана асăнмалăх чăваш тĕрриллĕ кĕпе парнеленĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕнчи 68-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн химии промышленноçĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн "Химпром" акционерсен уçă обществин ĕçченĕсене – 27-мĕш цехăн тĕрĕслевпе виçев хатĕрĕсен тата автоматика юсавĕн службин пуçлăхне **Валерий Борисович ВАРГАНОВА,** 16-мĕш цехăн аппаратчикне **Юрий Алексеевич ВАСИЛЬЕВА,** 46-мĕш цехăн тепловоз машинистне **Владимир Петрович СТЕПАНОВА,** 32-мĕш цехăн хими анализĕн лаборантне **Ольга Владимировна ТЕРЕНТЬЕВĂНА – "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

Шупашкар юрлать!

Çу уйăхĕн 23-24-мĕшĕсенче Шупашкарта пуçласа Пĕтĕм Раççейри хор фестивалĕ иртет. Мероприятие Культура çулталăкне тата Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул çитнине уявлама хатĕрленнипе çыхăнтарнă.

"Шупашкар юрлать!" хор фестивальне Чăваш Енри, Йошкар-Олари, Хусанти, Чĕмпĕрти музыка коллективĕсем хутшăнаççĕ. Ача сачĕсемпе шкул хорĕсем – Ю.Чичиковăн, В.Шаинскин, А.Островскин, А.Пахмутовăн, студентсемпе аслă ăрурисен хорĕсем А.Асламасăн, Г.Хирбюн, М.Глинкăн, И.Дунаевскин юррисене шăрантарĕç. Хора 700 ытла çын хутшăнмалла. Юрăсене театр композицийĕсем пуянлатĕç.

А.ГРОМОВА.

Пирĕннисем – çĕнтерӳçĕсем

Çĕнĕ Шупашкар çывăхĕнчи Тĕкĕрç катинче спорт ориентировки енĕпе Пĕтĕм Раççейри «Раççей азимучĕ – 2014» ăмăрту иртнĕ.

2005 çулта пуçарнă турнира çулсерен çĕр-çĕр çын хутшăнать. Кăçал 12-70 çулсенчи виçĕ пине яхăн спортсмен тупăшнă. «Раççей азимучĕ» – Çĕнĕ Шупашкарти чи пĕлтерĕшлĕ ăмăртусенчен пĕри. Унта ачасем те, ветерансем те, çемье командисем те вăй виçеççĕ. 9 çул каялла пĕрремĕш хут старта тухнисем халĕ хăйĕн çемйипе ăмăртăва хутшăнакансем те пур», – тенĕ Çĕнĕ Шупашкар хулин администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Сироткин. Пирĕн ентешсенчен Пĕтĕм Раççейри турнирта тĕрлĕ ушкăнра Çĕнĕ Шупашкарти пултарулăх çурчĕн вĕрентекенĕ Михаил Любавин, Олимп резервĕсен училищинче ĕçлекен Нина Бодренкова, «Чăваш Ен çамрăкĕсем» клуб членĕсем Евгений Любавин, Ольга Семенова, Алексей Петухов, Шупашкарти «Четра» клуб ертӳçи Валерий Гаврилов, ЧПУ преподавателĕ Артур Шугаев, «Сталь» спорт клубĕнчи Олег Павловпа Елизавета Михайлова тата ытти сем пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарнă.

А.МИХАЙЛОВ.

Çанталăк шăрăх тăнăран

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре пушар тухас хăрушлăх пысăк, ăна IV класли тесе çирĕплетнĕ. Çакна чи малтан сывлăш температури кăнтăрла 30 градус шăрăха çитнипе палăртаççĕ.

Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕнче пĕлтернĕ тăрăх – вăрман пушарĕсем уйрăмах 12 района сиен кӳме пултараççĕ: Улатăр, Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Елчĕк тата Тăвай районĕсене. Аса илтеретпĕр: пирĕн республикăра çу уйăхĕн 14-мĕшĕнчен вăрмана ирĕккĕн кĕрсе çӳреме чарнă. Вăрман пушарĕн службин ĕçченĕсем МЧС тытăмĕнче вăй хуракансемпе пĕрле талăкĕпех дежурствăра тăраççĕ, пушар лару-тăрăвĕн мониторингне ирттереççĕ, канакансем валли ăнлантару каласăвĕсем йĕркелеççĕ. 48 вăрманлăхра ку енĕпе пĕтĕмпе 80 специалист тăрăшать, 28 техникăпа тата пушар 26 вышкипе усă курать.

И.НИКОЛАЕВА.

Колонирен тарнă

Çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче ирхи 3-4 сехетре Çĕнĕ Шупашкарти юсанмалли 3-мĕш колонирен судпа айăпланнă çын тарнă.

Раççей Следствии комитечĕн Чăваш Енри Следствии управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх – 1985 çулта çуралнă Роман Нариманович Сидорова 2010 çулта çынна вĕлернĕшĕн тата ют пурлăха вăрланăшăн суд 16 çул ирĕклĕхсĕр хăварма йышăннă, арçын айăплав вăхăтне çирĕп режимлă колонире ирттернĕ.

"Ку фактпа пурте интересленнине тата пулса иртнин лару-тăрăвне шута илсе Следствии управленийĕ асăннă фактăн тĕрĕслев материалĕсене шалти ĕçсен пайĕнчен илес тата хăйĕн производствине йышăнас ыйтăва тăратнă", – палăртнă ЧР Следствии управленийĕн ертӳçин аслă пулăшуçи Олег Дмитриев.

Тарнăскере шыраççĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче следовательсем колонире вăй хуракансен ĕç-хĕлне, вĕсем хăйсен професси тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçлани-пурнăçламанни-не те право тĕлĕшĕнчен хак парасшăн.

Н.ПЕТРОВ.

Çĕнĕ тĕл пулусем, фильмсем...

Халăхсен хушшинчи Шупашкарти кинофестиваль малалла ĕçлет. Илемлĕ фильмсен тата наци киностудийĕсен конкурс программисемсĕр пуçне тата вун-вун мероприяти иртет республика тĕп хулинче, çавăн пекех кăçал "культура территорийĕ" ята тивĕçнĕ Патăрьелпе Хĕрлĕ Чутай районĕсенче.

● *Куравран.*

Шупашкарти "Волжский" кинотеатр çак кунсенче "Мосфильм – 90 çулта" ятарлă программăпа ĕçлет. Унта асăннă киностуди хăй вăхăтĕнче ӳкернĕ фильмсене кăтартаççĕ. Вĕсем: "Иван Васильевич меняет профессию", "Кубанские казаки", "Карнавальная ночь", "Мы из джаза", "Зимний вечер в Гаграх" тата ытти те. Çакна та палăртни вырăнлă: шăпах асăннă фильмсенче усă курнă хăшпĕр тумпа тата вĕсене ӳкернине сăнланă кадрсемпе паллашма май пулчĕ те "Çеçпĕл" кинотеатрти фойере.

"Фестивальсен фестивалĕ" программа та пуян. Куравçăсем Алексей Германăн "Трудно быть богом", Алексей Федорченкон "Небесные жены луговых мари", Хоаким Лафоссăн "После любви" ĕçĕсемпе паллашма ĕлкĕрчĕç ĕнтĕ. Сандра Неттельбекăн "Последняя любовь мистера Моргана", Жан-Марк Валлен "Долласкский клуб покупателей" фильмĕсем те хăйсен куравçисене кĕтеççĕ.

Кĕçĕн çултисене Узбекистан режиссерĕн Камара Камаловăн "Горькая ягода", "Дикарь", "Чужое счастье", "Дорога над небесами" фильмĕсем тыткăнлĕç.

Наци библиотеки çак кунсенче Халăхсен туслăх çуртне аса илтерет. Унта наци киностудийĕсен фильмĕсен конкурсĕ иртет. Асăнса хăварар: çак конкурса Чăваш Енрен "Нарспи" фильм /режиссерĕ Андрей Васильев/ та хутшăнать. Чăваш кинорежиссерĕсен ытти ĕçĕпе ЧР Патшалăх электрон тата кинодокументаци архивĕн кинозалĕнче паллашма май пур. Çак кунсенче унта Юрий Спиридоновăн "Муса Мусалаев. Путь воина" документлă фильмне, Владимир Карсаковăн "Юхха" илемлĕ картинине кăтартнă. Куравçăсем "Юхха" ĕçри Ольга Осипова тата Владимир Янтуш ролĕсемпе кăмăллă юлнă.

Кинофестивале республика тулашĕнче пурăнакан ентешсем те хутшăнаççĕ. Сăмахран, Беларуçре пурăнакан Дмитрий Михлеев кинорежиссер, сценарист, писатель Тутарстанри чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăл Шупашкара килсех çӳрет. Эпир те ун пирки "Хыпарта" пĕр хут çеç мар каласа кăтартнă. Йăхташăмăр "Беларуçфильмра" чылай вăхăт ĕçленĕ, документлă фильмсем ӳкернĕ. Илемлĕ фильмсенчен вара куравçăсем патне çаксене çитернĕ: "По секрету всему свету", "Три веселые смены", "Воля вселенной", "Шахтеры".

Ентешĕмĕр И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче студентсемпе тĕл пулĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Культура министерствин сăн ӳкерчĕкĕсем

● *Фильмпа паллашнă хыççăн.*

Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш **температури кăнтăрла 27, çĕрле 18 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 757 мм, сывлăшри нӳрĕк 40 процент.

Кун тăршшĕ 16 сехет те 45 минут.

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 25, çĕрле 15 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 755 мм, сывлăшри нӳрĕк 42 процент.

Кун тăршшĕ 16 сехет те 48 минут.

Аталану çулĕпе

Октябрьски райповĕ – 90 çулта

Кăçал тăхăр вуннă тултарнă Октябрьски райповĕн историйĕ пуян. Вăл 1924 çулхи пуш уйăхĕн 17-мĕшĕнче пуçланнă. Халăх пухăвĕнче Выççăлккă Тукайра /каярахпа – Ĕсмел, унтан – Октябрьски/ потребительсен «Шанчăк» ушкăнне йĕркелеме йышăннă, ăна ертсе пыма правлени суйланă, устав çирĕплетнĕ. Майĕпенех вăй илсе пынă, 90 çул хушшинче çĕр-шывпа пĕрле аталаннă, унăн историйĕн пĕлтерĕшлĕ тĕрлĕ тапхăрне пурăнса ирттернĕ. Çак шутра – коллективизаци, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи, ун хыççăнхи хуçалăха ура çине тăратассишĕн ырми-канми ĕçленĕ вăхăт, иртнĕ ĕмĕрĕн тăхăр вуннăмĕш çулĕсенчи кăткăс, пăтрашуллă тапхăр, экономика кризисĕ.

– Палăртма кăмăллă: пирĕн райпо ĕçленĕ, ĕçлет, малалла та ĕçлĕ, хăйĕн вăрăм ĕмĕрĕнче çирĕпленнĕ традицийĕсене пуянлатсах пырĕ. Çакна чунран шанатпăр, – тет райпо канашĕн председателĕ, Чăваш Республикин халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Сĕнтĕрвăрри районĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕ, РФ Центросоюзĕн «Раççей потребительсен кооперацине аталантарас ĕçе тӳпе хывнăшăн» орденĕн кавалерĕ Радим Почемов. – Райпон ĕмĕрĕ вăрăм пулни мăнаçлăх туйăмĕ çуратать. Паянхи куна чылай организаци сумлă çакăн пек юбилее паллă тăваймасть. Хăшĕсем халь çук та ĕнтĕ, историре ячĕсем кăна юлнă. Паллах, йывăрлăхсем те тупăнсах тăраççĕ-ха. Апла пулин те хуçалăха тытса тăма, анлăлатма вăй çитеретпĕр, çынсене усă кӳретпĕр. Сăмах май, Сĕнтĕрвăрринчи райпона хамăр йыша илни те тăхăр çул çитрĕ. Пирĕн ĕç-хĕл районăн мĕн пур территорийĕнче пулса пырать. Суту-илӳ, хатĕрлев, производство, общество апатланăвĕн, пулăшу отраслĕсем пурнăçпа тан пыма тăрăшаççĕ. Самана улшăннă май пирĕн те хамăрăн ĕçе çĕнетсех пыма тивет.

Çапах та, Радим Вячеславович палăртнă тăрăх, райпон нихăçан улшăнман пуянлăхсем те пур. Вĕсем – коллектива, пĕрлехи ĕçе чунпа парăннă çынсем. Организацири специалистсем пысăк квалификациллĕ, опытлă. Кунта ĕçлесе пĕлӳ, ăсталăх пухнă çынсем кирек ăçта та ăсталăхпа палăрнине асăнма кăмăллă. Вĕсем предпринимательлĕх каçалăкĕнче те çухалса каймаççĕ. Ку райпо кадрсен шкулĕ пулнине, унăн конкурент пултарулăхĕ çултан-çул ӳссе пынине витĕмлĕ кăтартса парать.

Пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлени, аслисем çамрăксене вĕрентсе, çул кăтартса пыни çитĕнӳсем тума пулăшать. Хăйсен пурнăçне райпопа çыхăнтарса тивĕçлĕ канăва тухнă çынсене кунта хисеплеççĕ, пулăшма тăрăшаççĕ. Сăвапла çак йăла çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать, райпо малашне вĕсемшĕн те тĕрев пулассине шантарать. Райпо правленийĕн председателĕ, ЧР халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ольга Тимофеева ертсе пыракан ушкăн Çĕнтерӳ уявĕпе саламлама вăрçă ветеранĕсем патне килĕсене кайнă. Шел, вĕсен йышĕ паян пысăк мар: Октябрьскинчи райпона вун сакăр çул ертсе пынă Николай Михайлович Михайлов, бухгалтерта тата сутуçăра ĕçленĕ Гурий Михайлович Иванов, экономист пулнă Мария Давыдовна Румянова, райпо ветеранĕсен тăлăха юлнă мăшăрĕсем Любовь Ивановна Иванова тата Раиса Афанасьевна Трофимова.

– Кăçал пирĕншĕн чи пысăк çитĕнӳ – райпон 90 çулхи юбилейĕ,– палăртать Р.Почемов. – Вăл пире вăйлăрах ĕçлесе халăха кирлĕ таварпа, пулăшупа тата лайăхрах тивĕçтерме, хуçалăхăн пурлăх базине пуянлатса пыма хавалантарать. Темиçе çул ĕнтĕ кашни лавккарах хуларинчен кая мар условисем тăвассишĕн ĕçлетпĕр, вĕри шыв, канализаци кĕртетпĕр. Паха оборудовани вырнаçтаратпăр, кондиционерсене хальхи йышшисемпе улăштаратпăр, çĕнĕ транспорт туянатпăр. Социаллă яваплă организаци пулнă май налуксене, коммуналлă тӳлевсене вăхăтра куçарса паратпăр. Конкурентлăха ӳстерме паянхи пурнăç ыйтăвĕсене шута илни пĕлтерĕшлĕ. Паянхи куна 11 лавккана тата аптекăсене пурне те /вĕсем улттă/ автоматизацилесе пĕрлехи сетьпе çыхăнтартăмăр.

Çĕнĕлĕхсем – куç умĕнче. Октябрьскинчи «Аниш» кафене тĕпрен юсаса хăтлăх кĕртнипе таврари ялсенче пурăнакансем те кăмăллă. Унта кĕрсе тухма меллĕ. Çывăхрах – автостанци, лавккасем, медицинăпа ветеринари аптекисем, Шĕнерпуç, Аксарин ялĕсем тата хула еннелле каймалли çулсен хĕресленĕвĕ. Кафене халăх йышлă çӳрет, туй, юбилей, ытти уяв ирттерме саккас паракан чылай.

– Хальхи вăхăтра Нишерпе Щамал ялĕсене газ кĕртес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр, – тет Октябрьски газ участокĕн мастерĕ Валерий Перов. – Кăнтăрлахи апата «Аниш» кафене килетпĕр. Кунта пире питĕ килĕшет. Кафе хăтлă, илемлĕ, ĕçченĕсем тарават, апачĕ тутлă. Хăнасемпе пĕрле канма условисем çителĕклĕ. Ялта çакăн пек кафесем питĕ кирлĕ. Райпо ертӳçисене халăхшăн тăрăшнăшăн тав сăмахĕ калас килет.

Октябрьски райповĕ районти пĕтĕм мероприятие хутшăнать, Чăваш Енре ирттерекен чылай конкурс-фестивальте час-часах палăрать. Унăн общество апатланăвĕ енĕпе ĕçлекен тулли мар яваплă «Исмели» пĕрлĕхĕ иккĕмĕш çул ĕнтĕ республикăри «Мăнкун асамĕ» конкурсра çĕнтернĕ. Сĕнтĕрвăрринчи çăкăр завочĕ республикăри экономика ăмăртăвĕнче 2013 çулхи кăтартусемпе çĕр çынран сахалрах ĕçлекен предприятисен хушшинче 1-мĕш вырăн йышăннă, паллă, сумлă çĕнтерӳçĕсемпе пĕр рете тăма пултарнă.

– Райпо юбилейĕ унăн ĕçченĕсен кăна мар, район, республика çыннисен уявĕ те. Мĕншĕн тесен потребкооперацин халăхшăн ĕçлет, кулленех унăн ыйтăвĕсене тивĕçтерет, – тет Радим Вячеславович. – Çавна май юбилей ячĕпе пурне те чĕререн саламлатăп, ырă сывлăх, тулăх пурнăç сунатăп.

Реклама

● Райпо канашĕн председателĕ Р.В.Почемов.

● Райпо ветеранĕсем Евгения Андреевнăпа Гурий Михайлович Ивановсем.

■ **Алина ЛУКИЯНОВА**

Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем 2014 çулхи çĕртме уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе ЙЫШĂНМАЛЛИ КУНСЕМ

/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/

02 В.И.Филиппов	Чăваш Республикин транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ
09 С.П.Димитриев	Чăваш Республикин Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçи
16 В.А.Аврелькин	Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕ
23 В.Н.Иванов	Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ
30 С.В.Мельников	Чăваш Республикин физкультурăпа спорт министрĕ

Хăйсен компетенцине кĕрекен ыйтусемпе ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем граждансене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн халăха йышăнмалли пӳлĕмĕнче 16 сехетрен пуçласа 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Республика тӳремĕ, 2-мĕш çурт, 105-мĕш пӳлĕм.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 62-34-53, 39-36-43.

Çынсене мĕн пăшăрхантарать?

2014 çулхи акан 16-мĕшĕнче иртнĕ Пĕрлехи информаци кунĕнче граждансенчен килнĕ ыйтусен хуравĕсем

2005 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ хыççăн черете тăнă инвалидсене тата сусăр ачасене ӳстерекен çемьесене хваттерпе тивĕçтермелли саккуна пăхса тухма май килмест-и? Ял тăрăхĕсен çак ыйтăва татса пама укçа-тенкĕ çук. А.Ефремов, Элĕк районĕнчи Элĕк ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

ЧР Стройминĕ пĕлтернĕ тăрăх – федерацин "Раççей Федерацийĕнчи инвалидсене социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтересси çинчен" саккунĕпе килĕшӳллĕн 2005 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă инвалидсемпе сусăр ачасене ӳстерекен çемьесене федераци бюджетĕнчен çурт-йĕрпе тивĕçтерме ирĕк пур. Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн вĕсене çурт лартма е туянма пĕр хутчен укçа параççĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма 2005 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ хыççăн черете тăнă инвалидсемпе сусăр ачасене ӳстерекен çемьесен йышĕнчи граждансене Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн пурăнмалли лаптăкпа тивĕçтереççĕ. Хальхи вăхăтра федерацин "Раççей Федерацийĕнчи инвалидсене социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтересси çинчен" саккунĕпе килĕшӳллĕн 2005 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ хыççăн черете тăнă граждансене пурăнмалли лаптăкпа тивĕçтерме палăртман.

Вăтам професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенче ĕçлекен педагогсен шалăвĕ, вăтам шкулсенче вĕрентекенсемпе танлаштарсан, мĕншĕн пĕчĕкрех? Шупашкар медицина колледжĕн Канаш хулинчи филиалĕн педколлективĕ.

ЧР Вĕренӳ министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Раççей Федерацийĕн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи "Патшалăхăн социаллă политикине пурнăçламалли мероприятисем çинчен" Указĕпе килĕшӳллĕн вăтам пĕлӳ паракан учрежденисенчи педагогика ĕçченĕсен вăтам шалăвне 2012 çулта, пуçламăш тата вăтам професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсенче ĕçлекен преподавательсемпе мастерсен вăтам ĕç укçине 2018 çул тĕлне регионти вăтам ĕç укçин виçипе танлаштарма палăртнă.

Раççей Федерацийĕн Правительстви 2012 çулхи чӳкĕн 26-мĕшĕнче патшалăх /муниципалитет/ учрежденийĕсенчи ĕç тӳлевĕн тытăмне тапхăрпа лайăхлатма 2012-2018 çулсем валли йышăннă программипе килĕшӳллĕн пуçламăш тата вăтам професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсенче ĕçлекен преподавательсемпе мастерсен вăтам шалăвĕ 2013 çулта регионти вăтам ĕç укçин 75 проценчĕпе, 2014 çулта 80 проценчĕпе танлашмалла. Чăваш Республикинче ку кăтартусем пысăкрах. 2013 çулта пуçламăш тата вăтам професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсенче ĕçлекен преподавательсемпе мастерсен вăтам шалăвĕ – 18071 тенкĕ е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 93 проценчĕ /шкулти педагогсен – 20141 тенкĕ/, 2014 çулхи I кварталта – 19232 тенкĕ /шкулта – 21270 тенкĕ/ пулнă.

Йĕпреç районĕнчи Березовка ялĕнчи шкул тăррине юсама май килмест-и? И.Степанов, Березовкăри шкул директорĕ.

ЧР Вĕренӳ министерстви пĕлтернĕ тăрăх – федерацин 2012 çулхи раштавăн 29-мĕшĕнчи "Раççей Федерацийĕнчи вĕрентӳ çинчен" саккунĕпе килĕшӳллĕн муниципалитетсен вĕренӳ учрежденийĕсене тĕпрен юсасси – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тивĕçĕ. Пурнăçланакан программăсемпе килĕшӳлĕн 2014 çулта Чăваш Республикин тата федераци бюджечĕсенчен муниципалитетсен вĕрентӳ организацийĕсене юсама укçа уйăрма палăртман.

Çӳлерех каланисене тĕпе хурса ЧР Вĕренӳ министерстви Йĕпреç район администрацине 2014 çулхи район бюджетне черетлĕ хут пăхса тухса çирĕплетнĕ чухне Березовкăри объекта юсама укçа уйăрма майсем тупма сĕннĕ.

Районти потребительсен обществи урлă кĕленче савăт пухассине йĕркелеме çук-и? Ытти районта ку енĕпе мĕнле ĕçлеççĕ? Л.Зверева, Хĕрлĕ Чутай районĕ, Акчикасси; А.Абукин, Комсомольски районĕ.

ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви пĕлтернĕ тăрăх – хальхи вăхăтра Чăваш Республикинчи Потребительсен обществин союзĕ кĕленче савăтсене халăхран йышăнма хатĕр мар, мĕншĕн тесен çак ĕç тăкаклă тесе шухăшлать. Ку ыйтăва татса пама район тата хула пуçлăхĕсем патне çырусем янă, потребительсен рынокĕнче ĕçлекен предпринимательсене, коммерци организацийĕсене кĕленче пухас ĕç-хĕле йĕркелеме сĕннĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьски ялĕнче Интернет хăвăртлăхĕ питĕ пĕчĕк. Ял çыннисем.

Чăваш Ен Информполитика министерстви çапла пĕлтерет: Ростелекомăн Чăваш Республикинчи филиалĕн ĕçченĕ каланă тăрăх – сирĕн яла Интернетпа ADSL технологийĕсемпе çыхăнтарнă. Хăвăртлăха абонент линийĕн пахалăхĕ /пăралуксен диаметрĕ т.ыт.те/, унăн тăршшĕ витĕм кӳрет. Ку тĕслĕхре лини вăрăм тата ун патне çыхăнакан нумай. Ростелеком Шĕнерпуçри çыхăну объектне туса пĕтернĕ хыççăн Октябрьскинчи схемăна улăштарма палăртать.

Муркаш районĕнчи Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Çĕнĕ Матьăк, Çĕмĕрткасси, Раккаш ялĕсенче çутă линийĕсен юписене хăçан улăштарма палăртаççĕ? А.Кузьмин, Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

ЧР Стройминĕ пĕлтернĕ тăрăх – "МРСК Волги" ОАО филиалĕпе "Чăвашэнергон" нумай вăхăтлăха çирĕплетнĕ планĕпе килĕшӳллĕн Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Раккаш ялĕнчи çутă юписене – 2018 çулта, Çĕмĕрткассинче – 2019 çулта, Çĕнĕ Матьăкра 2020 çулта улăштарма йышăннă.

"Шупашкар-Янăш" маршрутпа çӳрекен транспорта Шупашкар районĕнчи Чăрăшкасси ялне кĕрсе тухмалла тума май çук-и? Чăрăшкасси ял халăхĕ.

Чăваш Ен Трансминĕ пĕлтернĕ тăрăх – "Шупашкар-Янăш" çулпа çӳрекен 321-мĕш хула çум автобус линине ЧР "Чăвашавтотранс" ПУП тытса тăрать. 2014 çулхи акан 29-мĕшĕнчен асăннă маршрутпа çӳрекен автобус Чăрăшкасси ялне те кĕрсе тухать.

Ял тăрăхĕсенче полицин участок уполномоченнăйĕсене час-часах улăштарни канăççăрлантарать. Ю.Федяров, Çĕмĕрле районĕ, Çĕмĕрле ялĕ.

Чăваш Республикинчи ШĔМ пĕлтернĕ тăрăх – Раççей ШĔМĕн нормăпа право акчĕсемпе килĕшӳллĕн полицин уполномоченнăйĕсене администраци участокĕ çумне пĕр çулталăкран кая мар вăхăтлăха çирĕплетеççĕ. Лаптăк виçине, чиккисене Раççей ШĔМĕн территори органĕн пуçлăхĕ халăх йышне кура, оперативлă лару-тăрава хакласа, территори уйрăмлăхĕсене пахаласа, район, хула тата муниципалитетăн урăх йĕркеленĕвĕн пайланăвне шута илсе палăртать. Полицин участок уполномоченнăйĕ çук тапхăрта /отпуск, чирленĕ, ваканси е ытти сăлтавпа/ унăн тивĕçĕсене тепĕр уполномоченнăй пурнăçлать.

Хальхи вăхăтра Çĕмĕрле ял тăрăхĕ çумне çирĕплетнĕ И.Сергеев вĕренме кайнă май асăннă участока Раççей ШĔМĕн Çĕмĕрлери уйрăмĕн полицин аслă уполномоченнăйĕ Э.Чеблуков пăхса тăрать.

2014 çулта Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсен тăлăх арăмĕсене çурт-йĕрпе тивĕçтерме укçа уйăраççĕ-и? О.Кочергина, Етĕрне районĕ, Стрелецки ялĕ.

ЧР Стройминĕ пĕлтернĕ тăрăх – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене тата вĕсен çемйинчи федерацин "Ветерансем çинчен" саккунĕпе, РФ Президенчĕн 2008 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи "1941-1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене çурт-йĕрпе тивĕçтересси çинчен" Указĕпе килĕшӳллĕн социаллă çак пулăшăва илме ирĕк пур çыннисен пурăнмалли условисене лайăхлатма 2014 çулта федераци бюджетĕнчен Чăваш Республикине 100,2 млн тенкĕ килнĕ.

ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерстви пĕлтернĕ тăрăх – хальхи вăхăтра çурт лартма е туянма пĕр хутчен укçа илме ирĕк паракан свидетельствăсене парас ĕçхĕле йĕркеленĕ. Федераци бюджетĕнчен килнĕ укçа-тенкĕ асăннă категорири 95 граждан валли çитет.

Сĕт хакĕ мĕншĕн чакать? Л.Гаврилова, Етĕрне районĕ, Мăн Чураш ялĕ.

ЧР Ял хуçалăх министерстви пĕлтернĕ тăрăх – РФ саккунĕсемпе килĕшӳллĕн сĕт хакне патшалăх йĕркелеме пултараймать. Хака сутаканпа туянакан килĕшсе татăлса палăртаççĕ. Ял хуçалăх продукчĕсен тата сĕт хакĕ сезонран нумай килет. Çуркуннехи-çуллахи вăхăтра сĕт туса илесси вăйланнă май хак чакать. Хĕллехи вăхăтра сĕт сахалрах суса илнĕ май хаксем хăпараççĕ. Хаксем нарăсăн иккĕмĕш çурринче чакма пуçлани сисĕнет.

Кăçал халăхран туянакан сĕт хакĕ лайăх шайра тăрать. Етĕрне район администрацийĕн кăтартăвĕсемпе акан 25-мĕшĕ тĕлне сĕте халăхран 16-17 тенкĕпе пуçтарнă. Ку пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 60 процент ытларах тата республикăри вăтам хаксемпе шайлашуллă.

Етĕрне районĕнчи ТБО полигонĕн строительстви мĕнле пырать? Д.Скребков, Етĕрне хули.

ЧР Çут çанталăк министерстви пĕлтернĕ тăрăх – ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви çумĕнчи Инвестици политикин канашĕнче "Чăвашэнергосбыт" ОООн Улатăр районĕнче /кунта Улатăр, Вăрнар, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсем; Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай ялĕсем, Вăрнар тата Пăрачкав поселокĕсем; Улатăр, Çĕмĕрле, Етĕрне хулисем кĕреççĕ/ йăлари хытă каяшсене ĕçе кĕртмелли инженери инфратытăмне хута ямалли пилотлă проекта пурнăçламалли бизнес-плана пăхса тухса ырланă.

Ку проектпа килĕшӳллĕн Етĕрне районĕнче йăлари хытă каяшсен полигонне мар, çӳп-çап йышăнса ăсатакан пункт тума палăртнă.

Госслужба занятости Чувашии

Амăшĕн вĕренмеллех – пурнăçра кирлĕ пулать

Паянхи хĕрарăм хăйĕн професси ĕç-хĕлне çемье тăнăçлăхĕпе пĕр килтерме пултарсан чăннипех ăнăçлă шутланать.

Анчах та чылай чухне урăхларах килсе тухма пултарать. Çемьере çĕнĕ кайăк хушăнсан çакна уйрăмах туйса илетĕн. Амăшлăх – чылайăшĕн çунатлă ĕмĕчĕ тата кашни хĕрарăмăн çак çутă тĕнчери тивĕçĕ. Анчах та амăшĕсенчен хăшĕ-пĕри професси пурнăçĕнчен 1,5 е 3 çуллăх уйрăлмашкăн хатĕр мар.

Апла тăк хушма пĕлӳ илмешкĕн тата ăсталăх шайне упраса хăвармашкăн укçа-тенкĕ тăккаламасăрах пурнăç уттипе пĕр тан мĕнле пымалла-ха?

Чăваш Енри ĕçлев службин органĕсем ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ тата декрет тапхăрĕ вĕçленсен ĕçе тухма шухăшлакан хĕрарăмсене профессин хушма пĕлĕвне ямалли мероприятисене 2011 çултанпах пурнăçа кĕртме тытăннă. Вĕсен тĕллевĕ – пĕчĕк ачапа ларнă вăхăтрах хĕрарăма професси ăсталăхне пуянлатма май туса парасси, çĕнĕ программăсене алла илме, квалификацие ӳстерме пулăшасси.

Асăннă мероприятие финансламалли тĕп çăл куç – Чăваш Енĕн республика бюджечĕн укçи-тенки.

Хушма пĕлӳ илес шухăшлă çамрăк амăшĕн кун пек чухне вĕренӳ курсне пĕтернĕ хыççăнах ĕçе тухмалла тата служба органĕн центрне тивĕçлĕ документсем пырса памалла.

Хальхи вăхăтра асăннă ушкăна кĕрекен хĕрарăмсене ĕç рынокĕ ыйтакан 18 профессие хăнăхтараççĕ. Вĕсем персонал енĕпе ĕçлекен менеджер, маникюрша, парикмахер, кадр енĕпе ĕçлекен специалист, ПЭВМ операторĕ, "АСБУ операторĕ 1С: Предприяти" ĕçхĕлне уйрăмах кăмăлласа суйлаççĕ.

Ăсталăха ӳстермелли çакнашкал мел çамрăк амăшĕсен хушшинче ытларах сарăлнă. Тӳлевсĕр вĕренмелли майпа çулталăк пуçланнăранпа республикăра пурăнакан 213 хĕрарăм усă курнă.

Вера Иванова парикмахерта чылай çул тăрăшнă, имиджпа çыхăннă тытăмăн пур енлĕн аталаннă специалисчĕ пулма ĕмĕтленнĕ.

– Анчах та иккĕмĕш ачана çуратнă хыççăн професси енĕпе аталанасси пирки палăртса хунă ăнтăлава вăхăтлăха манма тиврĕ, – тет Вера. – Ачана пăхмашкăн илнĕ отпуск вăхăтĕнче тус-тантăш ăсталăха ӳстерес ыйтупа Шупашкар хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центра кайса килме сĕнчĕ. Мана унта косметолог-визажист-стилист специальноçпа пĕлӳ илме май пуррине пĕлтерчĕç. Тӳрех килĕшрĕм. Çу уйăхĕн вĕçĕнче курсран вĕренсе тухатăп та ача çуратиччен хам ĕçленĕ "Софт-Имидж" парикмахерские вырнаçас тетĕп, урăхла каласан профессин çĕнĕ стартне тухатăп.

Экономист профессине илнĕ Ольга Алексеева виççĕмĕш ачине çуратиччен "Строма" АХО генеральнăй директорĕ пулнă. Декретлă отпуска вĕçлесе ĕçе тухиччен вăл професси ăсталăхне пуянлатма шухăшланă.

– Ĕçлев центрĕ янипе "Смета ĕçĕ" программăпа квалификацие тӳлевсĕр ӳстерме май пурри çинчен пĕлсен питĕ савăнтăм, – кăмăллăн каласать Ольга. – Ака уйăхĕн вĕçĕнче вĕренсе пĕтертĕм те çу уйăхĕн уявĕсем хыççăн ĕçе тухрăм.

Çамрăк амăшĕсемшĕн ку мел чăннипех пайталлă. Анчах мероприятин эффективлăхĕ курăмлă-ши?

Чи малтанах, унăн социаллă пĕлтерĕшĕ пысăк. Кун пек чухне ĕçсĕрлĕхе профилактикăласси çинчен каласма пулать. Професси вĕренĕвĕн курсне пĕтернĕ хĕрарăмсеннен пĕри те ĕçсĕрлĕх статусне илмешкĕн регистрациленес тесе служба органĕн центрне пыман. Апла тăк ĕçсĕрлĕх шайĕ чакать, унсăр пуçне ĕçсĕрлĕхшĕн паракан пособи тӳлемелли бюджет укçи перекетленет.

Хĕрарăмсене вĕрентмешкĕн тăкаклана нухрат налук валли куçарнă укçа шучĕпе бюджета таврăнать.

Чи пĕлтерĕшли вара – курсра професси енĕпе илнĕ хăнăхупа ăсталăх кашни хĕрарăма пурнăçра хăйне тивĕçлĕ вырăн тупма, малашлăха хавхаланупа ăнтăлма май парать.

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби.

Пенси фончĕ хыпарлать

Ĕçпе тивĕçтерекен палăртать

РФ Пенси фончĕ ĕçпе тивĕçтерекенсене пенси палăртассипе çыхăннă ыйтусене пĕрлехи вăйпа татса пама йыхравлать.

Коллектив членĕсем халĕ пенси палăртас ыйтăва ĕçпе тивĕçтерекен урлă пуçарма пултараççĕ – федерацин 2013 çулхи раштав уйăхĕн 28-мĕшĕнчи "Страховани пенсийĕсем çинчен" 400-мĕш саккунĕ çапла тумашкăн ирĕк парать. Çын хăй килĕшнине çырса пĕлтернĕ тăрăх ĕçпе тивĕçтерекен унăн документчĕсене сканерласа гражданинăн персональнăй кăтартăвĕсене хӳтĕлемелли требованисемпе килĕшӳллĕн хӳтлĕхпе тивĕçтернĕ каналпа Пенси фондне çитерет. Унсăр пуçне çывăх 12 уйăхра пенсие каймалли ĕçтешсен списокне, çавăн пекех ватлăхри ĕç пенсине вăхăт çитиччен тухма ирĕк паракан ĕç вырăнĕсен переченьне электрон мелпе пĕлтерме май пур.

Пенси палăртмалли документсене маларах çитерни кăтартусене туллилĕхпе тата чăнлăхпа тивĕçтерет, граждансене ĕç хучĕсене хăйсем тĕллĕн пухассинчен хăтарать, пенси правипе усă курма май парать. Кирлĕ тĕк асăннă служба специалисчĕсем стажа тата ытти кăтартăва çирĕплетмешкĕн архивсене ыйтса çырни яраççĕ.

Паянхи кун тĕлне пирĕн республикăра информаци тĕлĕшĕнчен электрон мелпе килĕштерсе ĕçлесси пирки 15 ĕçпе тивĕçтерекенпе килĕшӳ тунă. Вĕсен йышĕнче – Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисенчи, Шупашкар тата Канаш районĕсенчи промышленноç предприятийĕсем, организацисем, медицина тата вĕренӳ учрежденийĕсем. 2013 çулта вĕсем 206 сотрудникăн документне электрон мелпе çитернĕ.

Пенси фончĕ çакнашкал хутшăнусене анлăлатма палăртать. Чăваш Енре ĕçпе тивĕçтерекенсен йышĕ 16 пинрен иртет, çуллен 25 пине яхăн пенси палăртаççĕ. Документсене электрон мелпе улăштарас тытăма çыхăнусăр майпа отчет тăратакан ĕçпе тивĕçтерекенсен 98 процентне кĕртнĕ – çапла тумашкăн нормативлă базăсăр пуçне техника майĕ те çителĕклĕ.

Килĕшĕве çирĕплетмешкĕн Пенси фончĕн территори органне пымалла, унăн тĕслĕхне РФ Пенси фончĕн республикăри сайтĕнче "Регионти ĕçпе тивĕçтерекенсене тата предпринимательсене" пайра вырнаçтарнă.

■ **В.ИЛЬИНА**

Çивĕч ыйту

Куккурус – пысăк тухăçлă культура

Хăй вăхăтĕнче, иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсен пуçламăшĕнче, çак культура пирĕн çĕр-шывра хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тупнă. КПСС Тĕп Комитечĕн 1953 çулхи авăн уйăхĕнче иртнĕ пленумĕ общество выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме йышăннă хыççăн фермăсен тупăшлăхне татăклăнах ўстерес тĕллевпе уй-хирте куккурус вăй илнĕ. Парти, унăн Тĕп Комитечĕн Пĕрремĕш секретарĕ, СССР Министрсен Канашĕн Председателĕ Н.С.Хрущев çĕнĕ культурăра ўсĕм-çитĕнӳ тĕп çăл куçне курнă.

Чăваш çĕр-шывĕнче куккуруса Вăрнар районĕнчи Ленин ячĕллĕ колхоз ертўçи Сергей Ксенофонтович Коротков çул панă. Кун пирки вăл хăйĕн «Кульцав çути» кĕнекинче /Мускаври Политика литературин издательствинче 1961 çулта çапăнса тухнă, чăваш вулавçисем патне тăван чĕлхепе тепĕр икĕ çултан çитнĕ/ çапла çырнă: «1954 çул пуçламăшĕнче мана Мускава Кремле чĕнсе илчĕç. Сирĕнпе Никита Сергеевич Хрущев калаçасшăн тесе пĕлтерчĕç. Вăл пирĕн колхозниксем мĕнле пурăнни, ĕçлени çинчен ыйтса пĕлчĕ, климатпа тата çĕр пулăхĕ мĕнле шайра пулнипе кăсăкланчĕ. Эпĕ пур ыйтăва та хурав парсан Никита Сергеевич çапла каларĕ: «Эсир пултаруллă ертўçĕ, мĕншĕнха сирĕн куккурус акма тытăнас мар, хăвăр тăрăхра çак культура пысăк тупăш панине тĕллевлĕ ĕçпе çирĕплетес мар?»

«Уй-хир пики» пулса тăнă куккуруса пирĕн республикăра пуçласа Кушлавăшпа Пăтавăш юхан шывĕсен хутлăхĕнчи хура тăпраллă пусăсенче акса тума пуçланă. Кăçал çĕнĕ культура Чăваш çĕр-шывĕнче «çырăнма» тытăннăранпа шăп та лăп 60 çул çитет.

...Ултă теçетке çул хыçа юлнă тапхăра таврăнар-ха. Сергей Коротковăн çĕнĕ пуçарăвĕ çав çулсенче чăннипех анлăн сарăлнă. Куккурус ўстермен хуçалăх пулман та ун чухне. Вăл калама çук тухăçлă çитĕнетчĕ, унăн кашни гектарĕ 800-1000 центнертан кая мар ешĕл апат панă. Ун валли пулăхлă çĕр лаптăкĕсем уйăратчĕç, кунпа пĕрлех уй-хире фермăсенчен лайăх çĕрнĕ тислĕк тоннитоннипе кăларатчĕç. Кульцавсем сĕт сăвассипе республикăра малти вырăнта пынин тĕп вăрттăнлăхĕ куккурусчĕ. Каярахпа, 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче С.К.Коротков Мускавра «Куккуруса – мухтав!» кĕнеке кăларнине ас тăватăп. Ун тăрăх хуçалăхсенче конференцисем ирттерни те манăçман-ха. Пĕтĕм çĕр-шывĕпех чап илнĕ ертўçе 1961 çулхи ака уйăхĕнче СССР Аслă Канашĕн Указĕпе Социализм Ĕçĕн Паттăрĕ ятпа иккĕмĕш хут чысланăччĕ...

Анчах та пурăна-киле «Хрущев культурине» те сивлеме пуçларĕç, вăл çакăн хыççăнах ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пусă çаврăнăшĕсенчен тухса ўкрĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ – çĕр-шыври ял хуçалăхĕнче, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре, пĕр çитменлĕх теприпне ылмашăнма тытăнчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен фермăсен тупăшлăхĕ палăрмаллах чакни сисĕнетчĕ. Çакăн пек ларутăру хуçаланнă тапхăрта куккурус акса тăвасси патне мухтанас-мăнаçланас шутпа каламасть. Пĕчĕк Упакассисем манăçнă культура уссине тепĕр хут туйса илчĕç. Халĕ вĕсем вăл йышăнакан лаптăка икĕ хут ўстерчĕç. Ферма район администрацийĕ паракан куçса çўрекен ялава виççĕмĕш çул ĕнтĕ хăйĕнче çирĕп тытать. Акă мĕнле иксĕлми вăй-хал пытаннă «уй-хир пикинче»! Кўршĕсене кура Пысăк Упакассинчи «Трудовик» агрофирма» ООО ертўлĕхĕ те юласшăн мар: Чăваш халăх поэчĕн Çемен Элкерĕн ентешĕсем кăçал ăна 40 гектар çинче çитĕнтерес тĕллевлĕ.

Йĕпреç тăрăхĕнче «куккурус эпопейине» малалла тăсăкансем татах та пур. Вĕсен хушшинче «Красный партизан», «Искра», Киров ячĕллĕ колхозсене тата «Патман» ял хуçалăх кооперативне палăртмалла. Асăннă хуçалăхсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине малтанхи шайран палăрмаллах ўстернин сăлтавне çакăнта шырамалла та.

Хальхи вăхăтра селекционерсем куккурусăн çĕнĕ сорчĕсене çул парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, унăн малашлăх гибричĕсене сăнаса пăхаççĕ. Çапла вара пуласлăхра çак культура агропромышленноç комплексĕн тытăмĕнче хăйĕн шанчăклă вырăнне тупатех. Кун пирки нимĕнле иккĕленӳ те пулмĕ.

60 çул хушшинче куккурус чап-сума та тивĕçрĕ, хăйсене каçăр тытакан пуçлăхсен айăпĕпе манăç тусанĕпе те витĕнчĕ. Анчах тĕрĕслĕхпе чăнлăх умĕнчен куça хупса иртмелле мар: пусă çаврăнăшĕсене хăйне «иккĕмĕш пурнăç» панă культура юбилей çулталăкĕнче нихăçанхинчен анлăрах лаптăксенче кашлатăрччĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

Чунри

Çăкăр

«Çăкăртан асли çук» тенĕ авалтан. Питĕ ăслă, вырăнлă сăмахсем. Темĕнле тутлă апатăн та сĕтел çинче çăкăр пулмасан тутлăхĕ чакать, темĕн çитменнине туятăн. Апата ларсан чи малтан алла çăкăр касăкĕ патне тăсатăн. Сĕтел çинче çăкăртăвар пулсан никам та эпĕ выçă, нимĕн те çимелли çук тесе каламасть.

Халĕ эпир çăкăр çук, ăна ăçта тупса илес тесе хăшкăлмастпăр. Лавккасенче лайăххинчен лайăххине суйлатпăр. Çамрăксем çăкăр нушине тўссе курман. Çапах та вăл хăйĕн хакне çухатнă теме çук. Аслăраххисем те çăкăр нуши çинчен манма пуçларĕç пулас. Аса илер-ха вăрçă вăхăтĕнче те, кайран та карточкăпа пĕчĕк виçепе çеç туяннине. Карточкăна пăрахăçласан та çăкăр лавкки умĕнче сехечĕ-сехечĕпе тĕркĕшнине...

Вăрçă вăхăтĕнче те, ун хыççăн та нумай çемьере çăкăр алла сайра лекнĕ. Хĕрарăмсемпе ачасем тăраниччен çăкăр çисе курасчĕ тесе мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен-ши! Иккĕмĕш çăкăр та – çĕр улми – дефицит пулнă.

Çăкăр хакне эпир ачаранах лайăх пĕлнĕ. Тăлăх ачасем пулнă май тăраниччен çăкăр çиеймренни час-часах пулнă.

Салтаксемшĕн те çăкăр питĕ хаклăччĕ – хĕç-пăшал пекех.

...1942 çулхи нарăс уйăхĕнче пире Шупашкарти çар чаçĕнчен фронта ăсатрĕç. Пуйăса ларас умĕн кашнине пĕрер çăкăр пачĕç /пĕр килоран ытла мар/. Пирĕн пуйăс Чул хулана çул тытрĕ. Пăравуссем ун чухне çĕр кăмрăкĕпе мар, вутăпа ĕçленĕ. Вутти чĕрĕ пулнă пирки çул çинче вăй /пăс/ пухма чарăна-чарăна ларнă. Чул хулана пĕр талăк кайрăмăр. Шупашкар çăкăрне пурте çисе янăччĕ. Чул хулара урăх памарĕç: Мускава çитсен илетĕр терĕç. Унта çитме талăк ытла. Çĕр каçрăмăр. Тĕп хулара лайăх тăрантарчĕç, тумлантарчĕç. Çула тухакансене çăкăр памарĕç, вырăна çитсен çитерессе шантарчĕç.

Калуґăна каçхине çитрĕмĕр. Çĕр каçма хваттерсене вырнаçтарчĕç. Çăкăр лекмерĕ, апат та пулмарĕ. Хваттер хуçин купăста çеç пурччĕ. Ăна краççын лампи çинче пĕçерсе çирĕмĕр. Ирхине ирех пасара çăкăр шырама чупрăмăр. Усси пулмарĕ: çула тухма васкатрĕç. Калуга станцийĕнчи чукун çул кĕперне аркатнăран тепĕр станцие çитиччен çуран утмалла пулчĕ. Çула юр хўсе лартнăччĕ, пурте ывăнтăмăр. Станцие çитсен фронта илсе каякан пуйăс каçалапа тин пулассине пĕлтерчĕç. Салтаксем выçă – кăшкăрма пуçларĕç. Рота командирĕ çывăхри яла кайма ирĕк пачĕ. Унта кăштах хырăма улталарăмăр, кантăмăр.

Тепĕр ирхине Сухиничине çитрĕмĕр. Унта пире кинотеатр пулнă йывăç çурта вырнаçтарчĕç. Кунта фашистсем лаша усранă-мĕн, тасатса та пĕтерейменччĕ.

Кашнине пĕр çавра çăкăр пачĕç, вăл чул пек хытă шăнса ларнăччĕ. Сапер кĕреçисемпе ватса пайларăмăр. Пĕр сехетрен вĕри яшка пулать терĕç пуçлăхсем. Эпир çав шăннă çăкăра пĕчĕккĕн кăшласа çисе ятăмăр. Ун пек тутлă çăкăр нихăçан та çимен пек туйăнчĕ. Сĕлĕ шўрпи пиçнĕ тĕле нихăшĕн те çăкăр юлмарĕ. Каплах сыпрăмăр яшкана. Пире, 25 салтака, пĕр сержантпа пĕрле, Шупашкарта йĕркеленнĕ стрелоксен 324-мĕш дивизине кайма направлени пачĕç. Çĕр каçипе пĕлмен çул-йĕрпе дивизи штабĕ еннелле утрăмăр.

Хамăн миномет батарейине çитсен, чăн та, пĕр çăкăр тыттарчĕç. Çăкăр нуши тинех пĕтрĕ тесе савăннăччĕ.

Нуши хамăртан аякка кайман-мĕн. Пуш уйăхĕнче /юр шывланнăччĕ/ пирĕн чаçе малти линие кайма приказ çитрĕ. Салтаксене строя тăратрĕç. Эпир, темиçе салтак, хĕлле пополнени шучĕпе пынисем, кăçатăсемпе тăратпăр. Дивизион фельдшерĕ çакна курчĕ те: «Ку шыв-шурта кăçатăллисене илсе каймастпăр, вĕсем шăнса стройран тухаççĕ», – терĕ.

Старшина чупкаласа темиçе мăшăр ботинка тупрĕ. Пире валли юлмарĕ. Миномет дивизионĕн командирĕ пире, икĕ салтака, начарланса çитнĕ çичĕ лашана пăхма яла хăварма хушрĕ. Пирĕн çара апат-çимĕç продукчĕсем илсе пыракан эшелона фашистсен самолечĕсем бомбăсемпе аркатнă пулнă. Çавна май паексене чакарчĕç: малти линирисене – кунне икшер сухари, пире, иккĕмĕш эшелонрисене, пĕрер сухари çеç пама пуçларĕç.

Ял оккупацире пулнăран çынсем пире апатпа пулăшаймастчĕç. Хамăр та выçă, лашасем те. Лашасене мĕнпе тăрантарассине пирĕн татса памаллаччĕ. Ирхи шăнпа Мишшăпа иккĕн хире тухса капан тĕпĕсенче юлнисене пуçтараттăмăр... Çавăн чухне хĕлле вĕлернĕ лашана тупрăмăр. Ирĕле пуçланăччĕ ĕнтĕ. Унăн какайне командир куриччен каса-каса çиеттĕмĕр. Апрелĕн 17-мĕшĕ Мишшапа иксĕмĕршĕн уяв пулчĕ: пире Англире туса кăларнă чаплă ботинкăсем пачĕç. Юр ирĕлсе пĕтнĕччĕ, çулсем çинче пылчăк та çукчĕ ĕнтĕ.

Май уявĕ умĕн мана çыхăну батальонне куçарчĕç. Вăл дивизи штабĕпе пĕрлеччĕ. Çăкăр нуши пĕтменччĕ-ха. Кухньăра сухари шўрпи çеç паратчĕç... Манăн икĕ литр кĕрекен пысăк котелок пулнă. Çур котелока яхăн çеç панăран вăл хырăм выççине тата ытларах хускатса яратчĕ. Çуркунне «наркомовский» текеннине 50-шар грамм пачĕç /кайран пăрахăçларĕç, çулла эрех ĕçтермен/. Çур литр эрех, махорка темиçе паек пухнăччĕ, поварсене хăналарăм. Çавăн хыççăн сухари шўрпине котелок туллиех тултарса пама пуçларĕç. Çитмесен тата сĕнетчĕç. Икшер котелок çисен те хырăм тăраннине туйман. Каярах çăкăр тĕлĕшпе кўренмеллиех пулман.

■ **Рев.МОИСЕЕВ.**

Комсомольски сали

Телейлĕ ватлăх

Ĕмĕр сывлăхлă пурăнăр

Ачасем, ашшĕ-амăшĕ тата аслашшĕ-асламăшĕ е кукашшĕ-кукамăшĕ пĕрле пурăнакан кил-йыша çеç манăн тулли çемье теес килет.

Виççĕмĕш сыпăкри тантăшĕсене шкулта пĕрле вĕренекенсен ăмсанас йăла пур. Ашшĕ-амăшĕ вăхăта ĕçре нумай ирттернĕрен ача вĕсемпе сахалрах хутшăнать. Уроксене те чылай чухне асламăшĕпе е аслашшĕпе пĕрле тăвать. Аслă ăрурисене пулах чĕр чунсене, вĕçен кайăксене, йывăç-тĕме, чечек-курăка, кăмпасене паллать. Вĕсемех вун-вун çул хушшинче тĕрĕсленсе пуянланнă ăс-тăн "урокĕсемпе" мăнукĕсене анлă пурнăç çулĕ çине тухма хатĕрлеççĕ. Кунашкал пуянлăха çамрăксем шкулта та, ашшĕ-амăшĕнчен те илеймĕç. "Ват çын – тăват çын" тесе вĕсем пирки ахальтен каламан.

Республикăра тăххăрмĕш е вуннăмĕш теçеткере пыракан, çĕр çултан иртнĕ çын сахал мар. Чылайăшĕн хастарлăхĕ халĕ те пысăк, сывлăхĕ çирĕп. Кил хуçалăхĕнче кăштăртатаççĕ, çемье бюджетне пуянлатма, кĕçĕн çултисене пăхма пулăшаççĕ.

Вăрнар районĕнчи Уйкас Кипекре пурăнакан Николай Трофимов иртнĕ уйăхра 90 çул тултарнă. Николай Трофимович Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, паттăрлăх кăтартнăшăн орденсемпе медальсене тивĕçнĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех Енĕш, Вăрман Кипек шкулĕсенче ачасене вĕрентнĕ. Вăрçă тата ĕç ветеранĕ çулла велосипедпа çўрет, кроликсем валли апат хатĕрлет, тĕрлĕ культура калчи çитĕнтерет.

Муркаш районĕнчи Мулкачкассинчи Наталья Кузьмина та нумаях пулмасть вуннăмĕш теçеткене пусрĕ. Наталья Федоровна вăрçă çулĕсенче вăрман каснă, торф кăларнă, Пермь облаçĕнчи совхозра ĕçленĕ. 5 хĕр, 14 мăнук, вĕсен 3 ачи – унăн чи пысăк пуянлăхĕ. Кинемей теплицăра ĕçлеме кăмăллать: пахча çимĕç, чечек калчи çитĕнтерет.

Тăхăр вуннăри Елизавета Кузьмина ывăлĕпе Николайпа, кинĕпе Надеждăпа тата 2 мăнукĕпе Канаш районĕнчи Пукăртанра пурăнать. Хăйне кура мар вашаватăп: апат хатĕрлет, хĕлле картишĕнче юр хырать, çулла шăлса тасатать, выльăх пăхать, йăрансене çум курăкран тирпейлет. Екки ярсан радио итлет, телекурав пăхать, чăваш хаçачĕсене юратса вулать.

Вăрнарта пурăнакан Александра Петрова кăçал ака уйăхĕнче 95 çул тултарнă. "Акă Шура аппа та çитрĕ", – теççĕ ăна кўршисем çурт умĕнчи сак çине уçăлма тухса ларсан. Александра Петровна район центрĕнчи типографире 30 çула яхăн ĕçленĕ, ăна çавăншăн редакци çулленех хаçат çырăнса парать. Кинемей хăйне килĕшекен статьясене куçлăхсăрах вулать. Вăл кинĕпе Альбинăпа килĕштерсе кун кунлать. А.Петрова чейе сахăр вырăнне пыл ярать. "Пылак çимĕçе кăмăлланăранах нумай çул пурăнатăп пулĕ", – тет.

Çак поселокри Лев Павлов тăхăр теçетке çула хыçа хăварнă, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Вăрнарсем ăна ăста шахматист пулнипе аван пĕлеççĕ. Лев Антонович кирек кампа та тупăшса выляма хавас.

Вăрăм ĕмĕрлисем кашни районтах тĕл пулаççĕ. Пурнăç опытне çамрăксен хушшинче сарма вĕсене час-часах тĕл пулусене чĕнеççĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Ырă тĕслĕх

Катка-пичке ăсти

Кашниех кил-çурт çывăхĕнчи илеме хушăнтарса пуянлатма тăрăшать: çырма-çатрана ешĕллетет, садра çимĕç паракан йывăç-тĕм çитĕнтерет. Çурт-хуралтă таврашне те çĕнетсех тăрать, хальхи стройматериалпа улăштарать.

Ку енĕпе Шупашкар районĕнчи Сарапаккасси ял тăрăхне кĕрекен Колешшăри чылай çынна палăртас килет. Геннадий Ильич водительте нумай çул тĕрлĕ автомашинăпа ĕçленĕ. Михаил Федотов экономист Кўкеçри килсене çут çанталăк газĕ кĕртес енĕпе прорабра тăрăшать, Владимир Николаев – ял клубĕн ертўçи, халăха концертсемпе савăнтарать. Юрлама-ташлама хăнăхтарать, «ГАЗель» автомашинипе тĕрлĕ тиев турттарса пулăшать. Çав вăхăтрах общество пурнăçĕнче те хастар.

Вулакансене Михаил Майоровпа паллаштарасшăн. Вăл Колешша ялĕнче 1950 çулта колхозниксен кил-йышĕнче çуралнă. Çемьере пиллĕкĕн – 3 ывăлпа 2 хĕр – çитĕннĕ. Чи асли Миша пулнă. Иккасси шкулĕнче 10 класс пĕтерсен ăна Шорккари хурăнташ пиччĕшĕ Валерий Иванов хăйĕнпе пĕрле Шупашкарти аш-какай комбинатне илсе кайнă. Кунта вăл малтанах катка-пичке тăвас ăсталăха вĕреннĕ.

Ят тухсан урине салтак атти тăхăннă. Таврăнсан аш-какай комбинатнех вырнаçать. Михаил çапла 37 çул катка-пичке ăстинче вăй хурать. Вăл хатĕрленĕ савăтсене çу тултарса Кубăна, Югославие тата ытти çĕр-шыва та ăсатнă. Ўркенмен Михаил Семенович. Комбинат рабочийĕсене те пахча çимĕç тăварлама тĕрлĕ виçеллĕ савăт туса панă. Ытларах юманпа çăкаран, хурăнпа хыртан.

Юратнă мăшăрĕпе Любовь Геннадьевнăпа иккĕшĕ ывăлпа хĕр çитĕнтернĕ. Алексей те, Ольга та çемьеллĕ, ашшĕпе амăшне пĕрер хĕрпе ывăл парнеленĕ. Çуллахи вăхăтра мăнукĕсем яла хăнана килеççĕ. Михаилпа Любовь халĕ – тивĕçлĕ канура. Ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн кил хуçи медальсемпе паллăсене, Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ.

Эпĕ нумай çыннăн килĕнче пулса курнă, анчах Майоровсенни пек чаплине ас тумастăп. Илемлĕ, таса та хăтлă. Кил хушшине бетон сарнă. Ниçта та пĕр çўпĕ кураймăн. Кашни япала хăйĕн вырăнĕнче. Мунчапа çенĕке йăлт вакун хăмипе тытса çавăрнă. Ырă шăршă сăмсана кăтăклать.

● *Михаил Майоров.*

Мастерскойĕнче вара мĕнле кăна инструмент çук... Пурне те стена çумне курăнмалла типтерлĕ вырнаçтарнă. Катка-пичке тумаллисем те пур.

Михаил Майоров патне ял çыннисем тĕрлĕ ĕçпе пулăшу ыйтма пыраççĕ. Пĕрисен – алăк, теприсен чўрече рами тутармалла.

Пахчара çу кунĕсенче тĕрлĕ чечек куç умĕнчен каймасть. Улма йывăççи, çырла тĕмми те темĕн чухлех.

Ялта шыв пăрăхĕ хывман пирки пахчара çăл чавнă. Тарăн вăл. Пускăча пўрнепе тĕксенех пўрте шыв кĕрет. Ырлăхах ĕнтĕ.

Михаилпа Любовь иккĕшĕ те – ĕç ветеранĕсем. Канлĕ ватлăхра ачисен тата мăнукĕсен телейĕпе савăнаççĕ.

■ **Владислав ПЛАТОНОВ**

Ăш вăркавĕ

Çĕртен писетпĕр мар-и?

Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче коллективлă садсенче çын сасси канмалли кунсенче татăлма пĕлместчĕ. Эрне варринче те ĕç хыççăн шавлăччĕ. Мĕн кăна çитĕнтерместчĕç пĕчĕк лаптăкра? Йăрансем тирпейлĕччĕ, тасаччĕ. Çум курăка ўсме паман. Экологи енчен таса та сывă, организмшăн усăллă пахча çимĕç, улма-çырла хĕл каçипех сĕтел çинчен кайман.

90-мĕш çулсенче пурнăç пачах тепĕр енне çаврăнчĕ. Ĕç укçине уйăхĕ-уйăхĕпе илеймен ĕççĕррисен йышĕ ўсрĕ. Хула хĕрринчи, ун таврашĕнчи дача çурчĕсене икĕ ураллă «кашкăрсем» иленчĕç. Çанталăк сивĕтсен нўхрепсем хуçисемсĕрех пушанма, савăтсапа, ĕç хатĕрĕсем çухалма пуçларĕç. Лартса-акса çитĕнтернĕ çимĕç ют çăвара лекнине, çуртсене ватса-çĕмĕрсе мĕн пуррине çаратнăран садсене пăрахакан нумайланчĕ.

Сăн ўкерчĕке, ялти строительство комбиначĕ хыçĕнчи коллективлă садра тунă. Юхăнса кайнă çĕмрĕк çуртсене, çум курăк пусса илнĕ лаптăксене хула таврашĕнчи садсенче пуринче те асăрхатăн. Çĕр çинче кăштăртатакан çын сайра халĕ. Çимĕç ўстерекен лаптăк та нумай мар. Чылай çĕрте масарти пек шăплăх хуçаланать.

Тахçан: «Çĕр аннемĕре хисеплетпĕр», – текенсем унран писеççĕ мар-и? Ăна юратас туйăма мĕнле тавăрмалла-ха? Ку ыйтăва хуравлама çăмăл мар. «Ултă соткăна» хăвăн туса хурас йĕркене вара йывăрлатнă. Çавна пула чылайăшĕ алă сулнă.

■ **Виталий АЧЧА.**

Канаш хули.

Автор сăн ўкерчĕкĕ

Кăларăма Валентин ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.

Сăн ӳкерчĕк аса илтерет

Нумаях пулмасть Чăваш халăх писателĕпе Николай Терентьев драматургпа ĕмĕрлĕхех сыв пуллашрăмăр.

Николай Терентьевич чăваш литературипе театршăн сахал мар ĕçленĕ, пурĕ 50 ытла пьесăпа сценари çырнă. Весене 15 чĕлхене куçарнă. Чи паллă ĕçĕсем: «Çĕрпе хĕр», «Çăлтăрсем сӳнмеççĕ», «Кук-кук çаплах авăтать», «Кайри мала, хур кайăксем», «Хумсем çырана çапаççĕ», «Пушар лаши» тата ыттисем. Унăн чылай пьесине К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театр сцени çинче лартнă. Халăх вăл çырнă пьесăсене яланах юратса вулатчĕ, эпĕ те унăн ĕçĕсемпе хаваспах паллашнă, Шупашкарта вĕреннĕ чухне те, ун хыççăн та Чăваш драма театрĕнче Николай Терентьев пьесисемпе лартнă спектакльсене курма тӳр килнĕ.

Сывлăха кăштах çирĕплетме «Чувашия» санаторие кайма шухăшларăм. Вăл Атăл хĕрринче питех те илемлĕ вырăнта вырнаçнă: сывлăшĕ уçă, çут çанталăк хитре. Пĕрле канакансен хушшинче хам çуралса ӳснĕ тăрăхри – кӳршĕри Пăчанар ялĕнчи – хĕр те пурччĕ: пĕр-пĕрне курсан савăнсах кайрăмăр. Валя манран пĕр çул кĕçĕнрех класра вĕренетчĕ.

Эпир вăхăта пĕрле ирттерме пуçларăмăр, процедурăсем хыççăн уçăлса çӳреттĕмĕр. Пĕррехинче пухăннисене Николай Терентьевпа тĕл пулу иртесси пирки пĕлтерчĕç. Вăл та кунтах иккен. Николай Терентьевич санаторире канакан Людмила Шадрина поэтессăпа паллаштарма шухăшланă. Малтанах вăл кăштах хăйĕн пирки каласа кăтартрĕ, унтан Людмила Шадринăна сăмах пачĕ. Вăл стоматолог иккен, пушă вăхăтра сăвă хайлать-мĕн. Тĕл пулу кăсăклă иртрĕ, Людмила Николаевна хăйĕн сăввисене вуларĕ, пухăннисен ыйтăвĕсене хуравларĕ. Çав вăхăталла эпĕ те кăштах çыркалама пуçланăччĕ, писательтен çырас ăсталăха еплерех ӳстермелли пирки ыйтса пĕлтĕм.

– Чун, тăрăшулăх кирлĕ, çынна юратни пĕлтерĕшлĕ. Хăв çырнине те хисеплемелле, хайлав çын чунне вăратма пултартăр, – тесе каланине ас тăватăп. Вăл мана ачасем валли çырнăшăн тав турĕ, малашне те хаçат-журналпа çыхăну тытма сĕнчĕ. Пуху хыççăн драматург хайлавĕсене тупса тепĕр хут вуласа тухнине ас тăватăп. Унăн кĕнекисене татах та ытларах вулас килнине пĕлтерсен вăл пире: «Пьесăсем сцена çинче пынă чухне вĕсене кĕнекен пичетлесе кăлармаççĕ», – терĕ.

Пĕррехинче уçăлса çӳренĕ чухне пирĕн пата фотограф пычĕ, эпир писателе хамăрпа пĕрле асăнмалăх сăн ӳкерĕнме ыйтрăмăр.

Унтанпа чылай çул иртрĕ, вăл тăван ялне пурăнма куçни пирки пĕлтĕм. Паллă драматург çут тĕнчерен уйрăлнă пулсан та çĕр çинче унăн паллă пьесисем, халăх юратăвĕ юлаççĕ, чăваш халăхĕ ăна яланах асра тытса пурăнĕ.

Сăн ӳкерчĕкре Николай Терентьевич пирĕн çине ăшшăн пăхать, «Тăван чĕлхе нихăçан та пĕтмĕ», – тесе калассăнах туйăнать.

■ **Галина ЗОТОВА.**

Хĕрлĕ Чутай районĕ, Штанаш

Юратни аван, упрама та ан ман

Муркашра Çемье кунне халалласа уяв мероприятийĕ иртнĕ. Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Владислав Ананьев районти чи лайăх, туслă тата тĕслĕх çемьесене саламланă май район администрацийĕн Тав çырăвĕпе, асăнмалăх парнепе чысланă.

Праçнике кашни ял тăрăхĕнчи пултаруллă çемьесене пухнă. Вĕсенчен кашнийĕ телей вăрттăнлăхне уçнă. "Пĕр-пĕрне юратни, ăнланни – телейлĕ çемьен тĕп талисманĕ",– палăртнă Муркашри Ефросинийăпа Николай Куликовсем. Москакассинчи Галинăпа Валерий Голубевсем вара хăйсен ашшĕ-амăшĕнчен тĕслĕх илнĕ, вĕренсе пынă. "Хуняма пире яланах пулăшнă",– пĕлтернĕ Галина Георгиевна. "Кил çуçи хĕрарăмĕн çемье пуçĕпе пĕр "урапа" çинчех ларса пымалла. Пĕр-пĕрне хисеплеме кăна мар, каçарма та пĕлмелле. Çавăн чухне кăна çемье арканмасть. Юрату та сӳнмест",– тенĕ Хорнуйри Михеевсем. "Çын пĕччен чухне тулли телейлĕ пулаймасть. Çавăнпа пĕр-пĕрне ĕмĕр тăршшĕпех упрамалла",– юлашкинчен пĕтĕмлетнĕ пухăннисем. Уяв юрă-кĕвĕпе, ташă-сăвăпа пуян пулнă. Телейлĕ мăшăрсем вальс ташланă, çамрăклăха аса илнĕ.

Р.ИВАНОВА.

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru реклама пĕлтерӳ Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Администрация Крымзарайкинского сельского поселения Аликовского района Чувашской Республики информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 49 лет из земель с/х назначения с кадастровым номером 21:07:171701:46 площадью 45,78 га, расположенного на территории Крымзарайкинского сельского поселения, для сельскохозяйственного производства.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429245, Чувашская Республика, Аликовский район, Крымзарайкинское сельское поселение, ул. Школьная, 19.

Справки по телефону: 60-2-58.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:150101:77 площадью 90913 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Тойсинское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: (83532) 6-14-26.

Постоянно действующая комиссия по приватизации муниципального имущества Шумерлинского района сообщает о проведении 11.07.2014 в 14.00 часов открытого по составу участников и форме подачи предложений о цене аукциона по продаже имущества:

Лот № 1 – Нежилые помещения общей площадью 1382,6 кв.м.: подвальный этаж - №№1 - 15; 1 этаж - №№1 - 15, 17, 19 - 25; 2 этаж - №№1 - 16, инвентарный номер Р23/10-1242-2, расположенные по адресу: Чувашская Республика, Шумерлинский район, с. Ходары, ул. Садовая, д. 17: начальная цена 414000 руб., "шаг аукциона" 20700 руб., задаток 41400 руб.

Решение об условиях приватизации муниципального имущества принято постановлением администрации Шумерлинского района от 15.05.2014 № 257.

Дата начала приема заявок на участие в аукционе - 22.05.2014, дата окончания - 19.06.2014. Документы, представляемые для участия в аукционе: заявка; заверенные копии учредительных документов; документ, содержащий сведения о доле Российской Федерации, субъекта Российской Федерации или муниципального образования в уставном капитале юридического лица (реестр владельцев акций либо выписка из него или заверенное печатью юридического лица и подписанное его руководителем письмо); документ, подтверждающий полномочия руководителя юридического лица на осуществление действий от имени юридического лица (копия решения о назначении этого лица или о его избрании) и в соответствии с которым руководитель юридического лица обладает правом действовать от имени юридического лица без доверенности; физические лица предъявляют документ, удостоверяющий личность, или представляют копии всех его листов; опись представленных документов. В случае, если от имени претендента действует его представитель по доверенности, к заявке должна быть приложена доверенность на осуществление действий от имени претендента, оформленная в установленном порядке, или нотариально заверенная копия такой доверенности. В случае, если доверенность на осуществление действий от имени претендента подписана лицом, уполномоченным руководителем юридического лица, заявка должна содержать также документ, подтверждающий полномочия этого лица. Все листы документов, представляемых одновременно с заявкой, либо отдельные тома данных документов должны быть прошиты, пронумерованы, скреплены печатью претендента (для юридического лица) и подписаны претендентом или его представителем. Указанные документы в части их оформления и содержания должны соответствовать требованиям законодательства Российской Федерации. Документы, содержащие помарки, подчистки, исправления и т.п., Комиссией по продаже муниципального имущества на аукционе не рассматриваются.

Документом, подтверждающим поступление задатка на счет, указанный в информационном сообщении, является выписка с этого счета.

Заявки и документы претендентов рассматриваются комиссией с 14 час. 00 мин. по московскому времени 26.06.2014. Задаток должен быть внесен не позднее 19.06.2014. Назначение платежа "задаток для участия в аукционе". Возврат задатков осуществляется: а) участникам аукциона, за исключением его победителя, - в течение 5 дней со дня подведения итогов аукциона; б) претендентам, не допущенным к участию в аукционе, - в течение 5 дней со дня подписания протокола о признании претендентов участниками аукциона. В случае получения Продавцом уведомления об отзыве заявки до даты окончания принятия заявок, задаток возвращается претенденту в срок не позднее 5 дней со дня поступления указанного уведомления. В случае получения Продавцом уведомления после срока окончания приема заявок, задаток претенденту возвращается в порядке, установленном для участников аукциона.

Данное информационное сообщение является публичной офертой для заключения договора о задатке в соответствии со статьей 437 Гражданского кодекса Российской Федерации, а подача претендентом заявки и перечисление задатка являются акцептом такой оферты, после чего договор о задатке считается заключенным в письменной форме.

Подведение итогов аукциона состоится 11.07.2014 в 16 час. 00 мин. по московскому времени по адресу: Чувашская Республика, г. Шумерля, ул. Октябрьская, д. 24, каб. 14. Победителем аукциона признается участник, предложивший наиболее высокую цену за имущество.

Договор купли-продажи заключается между собственником имущества и победителем аукциона не ранее 10 рабочих дней и не позднее 15 рабочих дней со дня подведения итогов аукциона. При уклонении или отказе победителя аукциона от заключения в установленный срок договора купли-продажи имущества аукциона он утрачивает право на заключение указанного договора и задаток ему не возвращается. Результаты аукциона аннулируются продавцом. Задаток и платеж от победителя аукциона вносятся на расчетный счет Шумерлинского райфинотдела (администрация Шумерлинского района, л/сч 05183ЧТ0012), расчетный счет № 40302810997005000011 в РКЦ г. Шумерля, БИК 049700000, ИНН 2118000954, КПП 212501001. Ознакомиться с формой заявки, условиями договора купли-продажи, можно с момента приема заявок по адресу: г. Шумерля, ул. Октябрьская, д. 24, каб. 14, тел.(83536) 2-43-42 и на официальном сайте www.torgi.gov.ru.

Информация об итогах аукциона по продаже права на заключение договоров аренды земельных участков

Министерство имущественных и земельных отношений Чувашской Республики сообщает, что аукцион, открытый по составу участников и по форме подачи предложений о цене права на заключение договоров аренды земельных участков, находящихся в государственной собственности Чувашской Республики, проведенный 19 мая 2014 года в соответствии с распоряжением Минимущества Чувашии от 31.03.2014 № 226-р, признан несостоявшимся.

Администрация Комсомольского района информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 49 лет из земель сельскохозяйственного назначения:

- с кадастровым номером 21:13:090108:284, площадью 65151 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Комсомольский район, Комсомольское сельское поселение.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429140, Чувашская Республика, с. Комсомольское, ул. Заводская, д. 57. Справки по телефону: 8(83539) 51567.

ПРОДАЮ

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

172.Гравмассу, керамблок, песок, **щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

31.Газобетонные БЛОКИ любых размеров, керамические поризованные блоки, утеплитель, облицовочный кирпич, силикатный кирпич. Доставка. Выгрузка. Т.: /8352/ 238115, 89170788115.

354.ПЧЕЛОСЕМЬИ. Т. 89176534903.

СУТАТĂП

364.Хурт-хăмăр вĕллисемпе – Комсомольскинче. Т. 89613429059.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕ Чăваш Республикин Пичет тата информатизаци енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ /2001-2002 çç./, Чăваш Республикин физкультурăпа спорт тата туризм министрĕн пĕрремĕш çумĕ /2002-2008 çç./, Чăваш Республикин Çĕрпӳ район администрацийĕн пуçлăхĕ /2008-2011 çç./

Юрий Михайлович НИКОЛАЕВ

вилнĕ пирки тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

Килти хуçалăх

Çăмарта хуппине ан пăрахăр

Апат-çимĕç хатĕрленĕ май кил хуçи хĕрарăмĕ çулталăк тăршшĕнче çăмартапа сахал мар усă курать. Хуппине ытларах чухне çӳп-çап витрине пăрахатпăр. Пахча пулсан ăна пухса пыма сĕнетпĕр. Вăл тăпрана йӳçеклентермешкĕн питĕ лайăх удобрени, мĕншĕн тесен унра кальци, усăллă ытти япала нумай. Ăна тĕпретсе те, кофе арманĕнче авăртса та çĕре хывма пулать.

Çапах та çăмарта хуппи хăвăртрах усă кӳтĕр тесен ăна типĕтсе çунтармалла, кĕлне пахча çимĕç лартас умĕн тăпрана варăнтармалла. Çăмарта хуппин çăнăхне кальци вырăнне килти чăх-чĕпе хушса парсан та лайăх.

Вулакан сĕнет

Базилик яланах ал айĕнче

Базилик мĕнлерех ӳстерни çинчен каласа кăтартас килет. Лимон шăршипе палăрса тăракан техĕмлĕх кирек мĕнле апата та ырă тутă кĕртет, микроэлементсемпе, тĕрлĕ витаминпа пуянлатать.

Базиликра фитонцидсем те пур. Унран хатĕрленĕ чей нервсене лăпкалăх кӳрет, кăмăл пусăрăнсан пулăшать, иммунитета çирĕплетет, пӳре чирĕсем канăççăрлантарсан усăллă.

Базилика ӳстерме пачах та йывăр мар. Эпĕ ăна çу уйăхĕнче куршаксене акатăп /ку ĕçе маларах та тума юрать/. Вăрлăха малтанах марганцовка ирĕлчĕкĕнче тытатăп /вăл шупка кĕрен тĕслĕ пултăр/. Калчасем шăтсан пĕр эрнерен ĕне тислĕкĕн шĕвекĕпе /1:10/ кăштах апатлантаратăп. Пĕр уйăхран калча йăран çине куçарса лартмалăх ӳсет.

Базилик вăрлăхне çу пуçламăшĕнче пахчана тӳрех акма та юрать. Ку ӳсен-тăран хĕвел лайăх ӳкекен, çил лекмен вырăнсене килĕштерет. Тăпри яланах нӳрлĕ пулмалла. Çак культура тăм тивесрен хăрать, çавăнпа аксан пĕр çул кăна ӳсет. Çапах та пысăках мар тĕмсене кĕркунне чечек куршакĕсене асăрханса куçарсан вĕсем чӳрече анинче хĕлле те хăйсене япăх мар туяççĕ.

А.ЯКОВЛЕВА.

Вăрнар районĕ.

Чечек тĕнчи

Пионсем илемĕпе савăнтарччăр

Илемлĕ тĕм пултăр, лайăх чечеклентĕр тесен пионсене апатлантарни кирлĕ. Специалистсем вĕсене çуркунне икĕ хутчен апатлантарма сĕнеççĕ.

Малтанхи хут – шăтса тухса ӳснĕ вăхăтра комплекслă минерал удобренийĕсемпе /азофоскăпа, кемира универсалпа/ е органика удобренийĕсемпе /чăх е ĕне тислĕкĕпе /1:20 тата 1:20 виçесемпе илмелле/. Çавăн пекех тĕм таврашне кĕл сапмалла.

Иккĕмĕш хут – пион папкаланнă вăхăтра. Хальхинче те комплекслă удобренисемпе тата ĕне тислĕкĕпе /1:10/, суперфосфат тата кали сульфачĕ хушмалла /пĕр витре шĕвек пуçне 20-30 грамм тата 10-15 грамм/.

Çак йĕркесене пăхăнни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Апатлантарас умĕн тата ун хыççăн ӳсен-тăрана лайăх шăвармалла /е ĕçе çумăр хыççăн пурнăçламалла/.

Пионăн тăкăнма пуçланă çеçкисене тата-тата илмелле. Çумăр час-часах çунă вăхăтра вĕсем чир ертме пултараççĕ.

Чечек çыххи валли йышлă çурнă тĕрлĕ вырăнти çеçкесене каса-каса илмелле, çапах та тĕме çаратсах хăвармалла мар.

Тĕпелте чухне

«Çуркунне» салат

1-ер çăмарта /пĕçерни/, кишĕр, чĕрĕ хăяр, 4-5 штук редис, симĕс сухан, салат, тутине кура тăварпа пăрăç, 2 апат кашăкĕ хăйма кирлĕ.

Сарлака турилкке çине салат çулçисене, хăяр çаврисене вырнаçтармалла. Çăмарта шуррине вĕтетмелле. Редиса, кишĕре, хăяра улăм пĕрчи пек турамалла. Симĕс сухан ямалла. Пурне те хутăштарса пăтратмалла, тăвар сапмалла. Хăймана çăмарта саррипе пăтратмалла, салата хушмалла. Турилкке варрине «Çуркунне» салата вырнаçтармалла.

Саккускă

6 çăмарта, 100 грамм сыр, 2 шăл ыхра, 1 кишĕр, кăштах укроп, тутине кура тăварпа пăрăç кирлĕ.

Çăмартапа кишĕре пĕçермелле. Çăмартана шуратмалла, çурмалла касмалла, саррине кăлармалла. Сыра, ыхрана, çăмарта саррине вăтам теркăпа хырмалла, пăтратмалла, тутине кура тăварпа пăрăç сапмалла. Çак хутăшран çаврашкасем тумалла, çăмарта шуррисен ăшне вырнаçтармалла. Салата укропа, петрушка çулçипе илемлетмелле.

Купăста солянки

800 грамм чăх ашĕ, 300 грамм шампиньон, 500 грамм купăста /йӳçĕтни те, чĕрри те юрать/, чĕпĕтекен пăрăç кăштах, 1-ер суханпа кишĕр, 2-3 çĕр улми, 1-2 апат кашăкĕ томат нимĕрĕ, 2 апат кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ, 2 шăл ыхра, маслина, ешĕл çимĕç, тăварпа пăрăç кирлĕ.

Чăх какайне пĕçермелле, какайне кастрюльтен кăлармалла, шӳрпине сăрăхтармалла. Çĕр улмине тăваткалласа турамалла, шӳрпене ямалла. Пуçлă сухана тата шампиньона вĕтетмелле, ӳсен-тăран çăвĕнче ăшаламалла. Пăрăça çаврашкасем туса касмалла, кишĕре шултра теркăпа хырмалла, купăстана турамалла. Пахча çимĕçе пĕрле пăтратса 10 минут пăшăхламалла. Томат нимĕрне хушса тата кăштах вăхăт çулăм çинче тытмалла. Пахча çимĕçе шӳрпене ямалла, тăвар, пăрăç сапмалла, лавр çулçи хушмалла. Пиçнĕ аша турамалла, солянкăна ямалла. Яшкана вĕтетнĕ ыхра, ешĕл çимĕç, маслина хушса çимелле.

Усăллă канашсем

● Аш çемçе пултăр тесен пĕçерме /ăшалама/ пуçличчен ăна сĕтре темиçе сехет тытмалла.

● Пăшăхлама пикениччен аша ăшаласа илмелле – сĕтеклĕрех пулĕ. Çавăрнă май касăксене вилкăпа шăтарас мар тесе асăрханса пăтратмалла – сĕткенĕ юхса тухĕ.

Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.

Ас тăвăм

Унăн ячĕ манăçмĕ

Туслă та ĕçчен çемьере çуралса ӳснĕ Геннадий. Ашшĕпе амăшĕ – Геннадий Михайлович водительте, Нина Николаевна экономистра ĕçленĕ – уннăн тата пиччĕшĕпе йăмăкĕшĕн яланах ырă тĕслĕх пулнă: кашниех пуçарулăхпа, маттурлăхпа, тăван кĕтесе юратас туртăм пысăккипе палăрнă. Шупашкар хула территорийĕнчи Сосновкăра пурăннă Калининсем 1972 çулта Шупашкар районĕнчи Чаканарта тĕпленнĕ. Ялти ачасем пекех малтан тăван кĕтесри пуçламăш шкулта вĕреннĕ, Ишекре вăтам пĕлӳ илнĕ. Гена хăйĕн тантăшĕсен хушшинче сăпайлăхпа, ĕçченлĕхпе тата мал туртăмпа уйрăлса тăнă. Шкул хыççăнах И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн физикăпа математика факультетне вĕренме кĕнĕ, çав вăхăтрах промышленноç завочĕн конструкторĕсен бюровĕнче ĕçленĕ.

1983 çулта Геннадий Калинин çар тумне тăхăннă. Унăн хĕсмет çулĕ пăлхавлă Афганистана выртнă. Интернационалист тивĕçне пурнăçлакан ентеш пĕр хут çеç мар вилĕмпе куçа-куçăн тăнă, паттăрлăхпа палăрнă. Кĕçех унăн кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ çиçме тытăннă. Командовани ашшĕ-амăшне маттур салтак çитĕнтернĕшĕн темиçе хут та тав тунă.

Шел, чĕррĕн-сыввăн тăван тăрăха таврăнма шăпа пӳрмен ăна: çула тухас умĕн эрне маларах душман пульли унăн пурнăçне татнă. Çав çапăçури паттăрлăхшăн Ишек каччине вилнĕ хыççăн Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Тăван ялĕнчи масарта пытарнă ăна. Патшалăх шучĕпе шурă гранитран ăсталанă палăк вырнаçтарнăччĕ вил тăприйĕ çине. Çулсем иртнĕçемĕн тĕссĕрленнĕ, сас паллисем вуланми пулнипе ăна çĕннипе, хура мрамортан тунă палăкпа улăштарчĕç. Пуçаруçисем – Геннадий Калининпа пĕр класра вĕреннисемпе Афганистан вăрçин Шупашкар районĕнчи ветеранĕсен пĕрлĕхĕн хастарĕсем. Н.Мадеров «афганец» сăвăплă ĕçе йĕркелессине пĕтĕмпех хăй çине илнĕ. Ишекри шкулта пĕрле вĕреннĕ, сăртлăтуллă çĕр-шывра хĕсметре тăнă В.Алексеев, Ю.Ямашев, А.Ландышев тата республикăри ытти районти В.Кузнецов, В.Столяров, Т.Петров, Ф.Осипов, Н.Харитонов, В.Акимов, çавăн пекех Шупашкарти агрегат заводĕнчи интернационалист çар çыннисен пĕрлĕхĕ /ертӳçи – Е.Чернов/ хăйсен тӳпине хывнă. Çав кунах Г.Калинин пурăннă çурт çине Асăну хăми вырнаçтарнă.

Николай Мадеров «афганец», çапăçури паттăрлăхшăн темиçе медале тивĕçнĕскер, палăкпа Асăну хăмин тăкакĕсене саплаштарма пулăшнăшăн В.Демидов предпринимательпе А.Фомиряков депутата чĕререн тав тăвать.

■ **Ю.ПЕТРОВ**

Чунсăрлăх

Куçран пăхма намăс пек

Вăрнар районĕнчи Волонтер ялĕнче пурăнакансем, ытти çĕрти пекех, Çимĕкчен сăвăплă вырăна – тăванĕсем яланлăхах канлĕх тупнă масара – тасатса тирпейлеме шухăш тытнă. Ял тăрăхĕн бюджетĕнчен укçа уйăрасса кĕтсе ларман вĕсем, пĕтĕм ĕçе нимелле пурнăçланă. Çапах та укçа-тенкĕсĕр темех тăваймăн: сетка-рабица, пăралук туянма кашни килтен пĕрер пин пуçтарма йышăннă. Ялта 22 кил, кашни хăй кăмăлĕпе панă – 28 пин тенкĕ пухăннă. Ял тăрăхĕн администрацийĕ кивçенле 16 пин тенкĕлĕх тимĕр-бетон юпа уйăрнă.

Волонтерсен çăви халĕ – чи таси-тирпейли. «Пăртас ял тăрăхĕнчи пилĕк çăваран тĕслĕхли теме те юрать», – терĕ асăннă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Петров. А.Спиридонов депутат ертсе пыракан ушкăн масар тавра кĕске вăхăтрах карта тытнă, чăрăш лартнă. Масар хапхине вырнаçтарасси юлнăччĕ...

Волонтер халăхĕн йышпа тунă ĕçшĕн савăнмалла пек. Пачах урăхла – пăшăрханмалли сиксе тухнă: такам Шупашкарти тĕрĕслев органĕсене çăхав çитернĕ. Масара тасатса тирпейлеме, тавра карта тытса çавăрма çынсене хистесе укçа пуçтарнă имĕш. Ял халăхĕн пухăвĕнче çапла йышăнни килĕшмен-ши çăхавça? Сас-хура сарса халăх хушшине савăл çапасшăн пулнă ахăр çав çын /е çынсем/. Унăн /е вĕсен/ пархатарлă ĕç тунисен куçĕнчен пăхма намăс пек...

■ **Светлана ЧИКМЯКОВА.**

Вăрнар районĕ

Ветеран парнисемшĕн

Сакăр çул каялла Раççей спорт мастерĕ Валерий Наумов шашкăлла тата шахматла выляма юратакансен хушшинче хăй çуралса ӳснĕ Вăрнар тăрăхĕнче ятарлă турнир ирттерме пуçланă.

Шашка-шахматпа çамрăклах туслашнăскер хăй вăхăтĕнче республика чемпионачĕн призерĕ, ял спортсменĕсен ăмăртăвĕн çĕнтерӳçи пулнă. Спорт ветеранĕн парнисене çĕнсе илессишĕн кăçал 50 ытла çын тупăшнă. Чăваш Енри спорт ăстисемпе вăй виçме Мускавран, Тутар тата Мари республикисенчен те килнĕ. Шашка турнирĕнче Раççей спорчĕн мастерĕ, Кӳкеçре пурăнакан Михаил Ефремов, Шупашкарти Николай Ларионов тата Вăрнарти Валерий Наумов палăрнă. Шахматла выляс енĕпе темиçе хут та республика чемпионĕ пулнă Игорь Арипов /Шупашкар хули/ çĕнтернĕ, Йошкар-Олари Владимир Некрасовпа Тутарстанри Петр Иванов иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăннă.

А.МИХАЙЛОВ.

Тем те пĕр

● Раççейри чи телейлĕ хуласен списокне пичетленĕ. Раççей çыннисен Интернетри пин-пин сăн ӳкерчĕкне тишкернĕ, мĕн чухлĕ кулнине палăртнă. Саранск Раççейри чи телейлĕ хула тесе йышăннă, ун хыççăн – Липецк тата Анат Чаллă. Малтанхи 10 хула шутне Шупашкар, Магнитогорск, Брянск, Новокузнецк, Тверь, Владимир тата Смоленск кĕнĕ. Чи телейсĕррисем – Геленджикра, Сочире, Мускавра, Санкт-Петербургра пурăнакансем.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăлла коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 Ne-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804,
"Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор А.П.МИХАЙЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем: 56-00-67 – директор – тĕп редактор; 56-33-64 – тĕп редактор çумĕ; 56-04-17 – тĕп редактор çумĕ; 62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем: 28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ; 56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ; 56-08-62 – экономика пайĕ; 56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ; 56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ; 56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ; 28-82-91 – корректорсем; 56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ: 28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ; 56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем: 8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай, /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç; 28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Çç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене параканскер яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Çç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7497. Заказ 1827.